Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчеnе тухать

25 (8091) № ✻ Юн кун, 2013 ҫулхи ака (апрель) уйăхĕн 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ҫур аки васкатать

***Хĕвел кунсерен ҫӳлтен ҫӳле хăпарнине пăхса-сăнаса тăнă май хресченĕн хире тухиччен хăй ĕҫлемелли техникине техосмотр тăратмалла та ĕҫе тухма ирĕк илмелле. Ҫакна хатĕрленӳ ĕҫĕн тĕп тӳпи тесе шутлать ҫĕр ĕҫĕпе ыранхи куна пăхса пурăнакан.***

***– Ҫур аки ҫывхарса пынине куратпăр тата паянхи ĕҫсен пĕлтерĕшне ăнланатпăр. Ҫак ыйту кун йĕркинче нихăҫанхинчен те ҫывăх тăрать. Ҫавăнпа та паян пурнăҫлакан ĕҫсене кулленхи тĕллев туса ҫур акине хатĕрленетпĕр, – терĕ ҫĕр хатĕрлемелли агрегата ĕҫе хатĕрлекен ушкăнри Василий Яковлев механизатор (сăн ӳкерчĕкре сылтăмри). Унăн юлташĕсем Федор Журавлевпа Александр Архипов (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) ҫак сăмахсемпе килĕшсе пуҫăннă ĕҫе малалла тăсрĕҫ. Суворов яч. хис. хуҫалăхра ҫур акине хатĕрленессипе ĕҫсем епле пынипе тĕплĕнрех хаҫатăн 3-мĕш страницинче паллашăр.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юсавлă техника мал ĕмĕт ҫуратать



## 15 адреспа кĕтеҫҫĕ

**Универсаллă электронлă карттăсем**

Чăваш Енре пурăнакансен хăйсен универсаллă электронлă карттинче транспорт приложенине 15 пунктра хушма май пур. Вĕсенчен 14-шне почта ҫыхăнăвĕн уйрăмĕсен бази ҫинче, пĕрине «ЕТК» ООО тĕп офисĕнче йĕркеленĕ. Малашне вĕсен шучĕ ӳссе пымалла.

УЭК-па патшалăх, муниципаллă тата коммерци услугисемпе тата сервисĕсемпе усă курма май пур. Унпах патшалăх пенси страхованийĕн страховани свидетельстви (СНИЛС), обязательнăй медицина страхованийĕн страховани полисĕ (ОМС) вырăнне усă курма та пулать. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара ҫынсем УЭК-па обществăлла транспортпа ҫӳренĕшĕн те тӳлеме пултараҫҫĕ.

УЭК-ăн транспорт приложенийĕсене укҫа хушмалли пунктсем ҫак адрессемпе вырнаҫнă:

**Шупашкар хулинче:** Мускав проспекчĕ, 41/1 («ЕТК» ООО тĕп офисĕ); Ленин проспекчĕ, 2 (Тĕп почтамт); Николаев урамĕ, 57 (почта ҫыхăнăвĕн 22 № уйрăмĕ); Энтузиастсен урамĕ, 23 (почта ҫыхăнăвĕн 23 № уйрăмĕ); 9-мĕш пилĕк ҫуллăх урамĕ, 19/37 (почта ҫыхăнăвĕн 27 № уйрăмĕ); Тракторостроительсен проспекчĕ, 63/21 (почта ҫыхăнăвĕн 28 № уйрăмĕ); Ленинградская урам, 16 (почта ҫыхăнăвĕн 32 № уйрăмĕ); М. Павлов урамĕ, 58 (почта ҫыхăнăвĕн 34 № уйрăмĕ); Чернышевский урамĕ, 5 (почта ҫыхăнăвĕн 38 № уйрăмĕ); Гидростроительсен урамĕ, 4 (почта ҫыхăнăвĕн 1 № уйрăмĕ).

**Ҫĕнĕ Шупашкар хулинче:** Винокуров урамĕ, 23 (почта ҫыхăнăвĕн 5 № уйрăмĕ); Винокуров урамĕ, 111 (почта ҫыхăнăвĕн 6 № уйрăмĕ); 10-мĕш пилĕк ҫуллăх урамĕ, производство участокĕ.

**Ҫĕмĕрле хулинче:** Чайковский урамĕ, 1 (почта ҫыхăнăвĕн 2 № уйрăмĕ); Октябрьская урам, 6 (почта ҫыхăнăвĕн 3 № уйрăмĕ).

## Ҫурхи шыв-шур: тимлĕхе ӳстермелле

**Комментари**

***Пурте телевизор пăхатпăр, радио итлетпĕр. Ҫулленех ҫурхи шыв-шур тапхăрĕ ҫынсем умне чылай ыйту, проблема кăларса тăратать. Хăш-пĕр ҫĕрте ялĕ-ялĕпе ҫурхи шыв илнисем те пур. Районта ку тĕлĕшпе лару-тăру мĕнлерех-ха? Ҫынсен ҫурчĕсене шыв илес хăрушлăх ҫук-и, гидротехника сооруженийĕсене сыхласа хăварма мерăсем йышăннă-и?***



**Район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуҫлăхĕ Николай МИЛЮТИН:**

– Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне илес пулсан республикипе юр хулăнăшĕ вăтамран 33 сантиметрпа танлашать. Ку вăл ытти ҫулхисенчи вăтам кăтартуран 7 сантиметр нумайрах. Апла пулин те район шайĕнче чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухас хăрушлăх пулмалла мар. Мĕншĕн тесен ҫанталăк тăрук ăшăтса ямарĕ. Каҫхине шăнтать, кăнтăрла ăшăтать. Юр ытлашши хăвăрт ирĕлмест. Ку вăл меллĕ самант.

Апла пулин те лăпкă пулмалла теместĕп. Иртнĕ ҫулхи тĕслĕхсем те ҫавна ҫирĕплетеҫҫĕ. Пĕлтĕр ял ҫыннисен Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Шуркасси ялĕнчи Луговая урамри 9 хуҫалăха, Йӳҫкасси ял тăрăхĕнчи Анатри Панклири 4 хуҫалăха шыв илнĕччĕ. Конкретлă мерăсем йышăннă май ун чухне ыйтусене татса пама май килчĕ. Кăҫал та асăннă вырăнсенче пулса курнă, лару-тăрăва тишкерсе хак панă, мерăсем йышăннă. Иртнĕ ҫулхи пекки кăҫал пулмалла мар. Ҫапах шыв илме пултаракан вырăнсенчен ҫынсене эвакуацилесе вăхăтлăх вырнаҫтарассин планне ҫирĕплетнĕ. Кун пек пунктсем пĕтĕмпе 18 пăхса хунă.

Ҫурхи шыв-шур тапхăрне ирттерессипе районта ятарлă комисси ĕҫлет. Ăна район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳҫи Владимир Никитин ертсе пырать. Комисси членĕсем тăтăшах вырăнсене тухса ҫӳреҫҫĕ, ҫурхи шыв-шур тапхăрне ăнăҫлă ирттерессипе ҫыхăннă ĕҫсене йĕркелеме пулăшаҫҫĕ. Кун пек комиссисене вырăнсенче кашни ял тăрăхĕнчех йĕркеленĕ.

Малтанласа палăртнă тăрăх ҫурхи чи вăйлă шыв-шур апрелĕн 15 – 20-мĕшĕсенче пулмалла. Хальхи вăхăтра пур ял тăрăхĕсен территорийĕсенче те гидротехника сооруженийĕсене пăхса тăрассипе, шыв юхса тухмалли каналсемпе пăрăхсене пăртан тасатассипе тимлеҫҫĕ. Апла пулин те хăш-пĕр ҫĕрте ҫак ĕҫсене лайăхрах йĕркелемелли куҫ кĕрет. Сăмах май гидротехника сооруженийĕсем районтерриторийĕнче 70-е яхăн. Кирлĕ ĕҫсене вăхăтра туса ирттерсе вĕсене пурне те сыхласа хăварасчĕ.

Хĕле кĕриччен ҫĕр япăхах мар шăнчĕ. Апла пулин те ҫуртсен путвалĕсене, хуҫалăхсен хранилищисене ҫурхи шыв кĕрсе каяс хăрушлăх ҫук мар. Ҫавăнпа вĕсене вĕҫĕмех пăхса тăрас пулать, шыв ҫулĕсене уҫса ямалла. Уйрăм ҫынсен нӳхрепĕсене шыв кĕрсе кайнă тĕслĕхсем пур ĕнтĕ.

Ҫулсем пирки те манма кирлĕ мар. Вĕсене те йĕркеллĕ пăхса тăрас пулать. Ҫулсене юртан-пăртан тасатмалла, вĕсем ҫинчи шыв кӳлленчĕкĕсене юхтарса ямалла. Гидротехника сооруженийĕсем, ытти объектсем патне пыма, ялсене автомашинăпа кĕрсе тухма ҫулсене йĕркене кĕртмелле.

Ҫавна палăртса хăварасшăн. Ҫурхи ейӳ тапхăрне йĕркеллĕ ирттерсе ярассишĕн, палăртнă мероприятисене кирлĕ пек пурнăҫлассишĕн хăйсен полномочийĕсене кура кашни ертӳҫĕ персоналлă яваплă пулса тăрать.

**Республикăра**

## АПК аталанăвĕ – актуаллă

Ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче Чăваш патшалăх ял хуҫалăх академийĕнче ял хуҫалăхне аталантарассипе йĕркеленĕ Патшалăх программине реализацилессипе, ҫур акине хатĕрленессипе тата выльăх-чĕрлĕх отрасльне пулăшассипе анлă канашлу иртнĕ. Унăн ĕҫне РФ Ял хуҫалăх министрĕ Н. Федоров, Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ М. Игнатьев, ытти официаллă ĕҫченсемпе агропромышленность комплексĕн представителĕсем хутшăннă.

Н. Федоров канашлăва уҫнă май ял хуҫалăх аталанăвĕн приоритетлă енĕсене тĕрĕс палăртма кирлине тĕслĕхсемпе ҫирĕплетнĕ.

М. Игнатьев хăйĕн сăмахĕсене производство кăтартăвĕсемпе никĕслесе Чăваш Енре ял хуҫалăх аталанăвĕ ҫине пысăк тимлĕх уйăрни пирки каласа панă. Тивĕҫлĕ йышăнусене пула юлашки 5 ҫул хушшинче ҫеҫ республикăра ял хуҫалăх продукцийĕн производство индексĕ 20,4 процент ӳснĕ. Республика хăйĕн производство хăвачĕсемпе халăхăмăра сĕтпе, пахча ҫимĕҫпе тата ҫĕр улмипе туллин тивĕҫтерет.

Кăҫал республикăна федераллă бюджетран 586,9 миллион тенкĕ килсе ҫитнĕ. Унăн пысăк пайне ял хуҫалăх предприятийĕсен счечĕсем ҫине куҫарнă та ĕнтĕ.

**Пĕтĕм Раҫҫейри акци**

## «Ентешсем тав туни»

Апрелĕн 3-мĕшĕнче Раҫҫейăн пур регионĕсенче те Пĕтĕм Раҫҫейри «Ентешсем тав туни» ыр кăмăллăх акцийĕ пуҫланчĕ. Ăна Аслă Отечественнăй вăрҫăра Ҫĕнтерӳ тунăранпа 68 ҫул ҫитнине халалланă.

Раҫҫей почти ҫĕр-шывра пурăнакансене пурнăҫри паттăрлăх тĕслĕхĕшĕн ветерансене тав тума, Аслă Ҫĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламласа открыткăсемпе Тав ҫырăвĕсем ярса пама чĕнсе калать. Мĕншĕн тесен ветерансемшĕн вăрҫă ҫулĕсенче почта вĕсен пурнăҫĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнă. Пирĕнтен кашнинчен нумай кирлĕ мар: почта ҫыхăнăвĕн кирек хăш уйрăмĕнче маркăллă конверт е открытка туянăр, палламан-туман ветеран ячĕпе тав тата салам сăмахĕсем ҫырăр. Сирĕн тав сăмахĕсем вара кашни ветеран патнех ҫитĕҫ. Майăн 9-мĕшĕччен вĕсене пирĕн почтальонсем Президент ҫырăвĕпе пĕрле ветерансене ҫитерсе парĕҫ. Акци апрелĕн 3-мĕшĕнче пуҫланчĕ, майăн 9-мĕшĕччен пырать.

**Марафон**

## Пуҫаруллăрах пуласчĕ

Республикăра пыракан «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ вăй илсех пырать. Апрелĕн 5-мĕшĕ тĕлне марафон счечĕ ҫине пурĕ 3 миллион та 358 пин тенкĕ ытла куҫарнă. Пирĕн районăн тӳпи ку пухкăчра пысăках мар-ха: 8550 тенкĕ чухлĕ. Районтан куҫарнă укҫа-тенкĕн ытларах пайĕ – уйрăм ҫынсенчен. Апла пулин те предприяти-организацисен тĕслĕх илмелли пур: иртнĕ кунсенче акă Ильич ячĕпе хисепленекен хуҫалăх марафон счечĕ ҫине укҫа куҫарса хăйсен ырă пуҫарăвне тунă.

Аса илтеретпĕр, ҫак марафонта пухăнакан укҫа-тенкĕ каярах района таврăнать. Ăна хамăр районта йывăр лару-тăрура пурăнакан ачасене пулăшма усă кураҫҫĕ. Сăмахран, кӳршĕллĕ Элĕк районĕ марафона 160 пин тенкĕ ытла хывнă, Вăрнарсен тӳпи вара 350 пин тенкĕрен те ытларах. Ҫавăнпа пирĕн те кашнинех пуҫаруллă пулма тăрăшасчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Саламлатпăр**



Юнкă ялĕнче пурăнакан ЧР тава тивĕҫлĕ учительне, пур ĕҫе те пултаракан ĕҫ ветеранне – **Николай Порфирьевич МАРЯШКИНА** апрелĕн 12-мĕшĕнче 75 ҫул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. 30 ҫул шкулта ĕҫлерĕр, ҫитĕнекен ăрăва вĕренӳре те, спортра та пысăк ҫитĕнӳсем тума пулăшрăр. Эпир халĕ те Сире ырă сунса Сирĕнпе мухтанатпăр. Кун-ҫулăр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Салампа: Юнкăри шкул тата «Орленок» коллективĕсем, кунтан вĕренсе тухнă шкул ачисем.**



Ака уйăхĕн 8-мĕшĕнче Орининти вăтам шкулта кĕҫĕн классене вĕрентекен **Татьяна Сергеевна ГОРШКОВĂН** сумлă юбилей пулчĕ. Татьяна Сергеевна хисеплĕ ĕҫтеш, хаклă мăшăр, ырă кăмăллă кукамай. Юбилей ячĕпе эпир ăна ăшшăн саламлатпăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-ҫул, хушпу тенкисем пек ҫутă пурнăҫ, нихăҫан иксĕлми телей, ăнăҫу сунатпăр. Яланах хальхи пек ырă кăмăллă, хастар та пултаруллă пулăр. Тура сире вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

**Салампа: Орининти вăтам шкул коллективĕ, кунтан вĕренсе тухнисем, шкул ачисем.**

Пенси фондĕнчен пĕлтереççĕ

# Кăçал – иккĕмĕш хут

***Апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пур йышши пенсисемпе федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен тӳлевĕсем ӳсрĕç. Палăртса хăвармалла, пенси мĕн чухлĕ ӳсесси унăн виçинчен килет, çавăнпа та ӳсĕм виçи кашнин тĕрлĕрен пулать.***

***Ĕç пенсийĕсем вăтамран 3,3 процент ӳснĕ, социаллă пенсисем – 1,81 процент, федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан тӳлев тата соцпакет виçи – 5,5 процент.***

**Ватлăха пула, инвалида тухнине пула тата çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан пенси виçине 3,3 процент ӳстерне**. Ку суммăна Раççей Пенси фончĕн тупăшĕ пĕр пенсионер пуçне 2012 çулта мĕн чухлĕ ӳснине шутласа палăртнă. Аса илтеретпĕр, инфляцие кура 2013 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçăнса ĕç пенсийĕсене 6,6 процент индексациленĕччĕ ĕнтĕ.

Çапла вара ватлăха пула паракан пенсин вăтам виçи кăçалхи февральтипе танлаштарсан Чăваш Республикинче 305 тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ (çулталăк пуçланнăранпа – 900 тенкĕне яхăн), 9630 тенкĕпе танлашрĕ. Асăннă виçе пенсионерăн Чăваш Республикинчи пурăнма кирлĕ минимумĕнчен (4327 тенкĕ) 2,2 хут пысăкрах. Республикипе вара ĕç пенсине пĕтĕм пенсионерсен 92 проценчĕ илсе тăрать.

Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕпе 8748 тенкĕпе танлашнă. Кăçалхи февраль уйăхĕнче вăл вăтам шутпа 266 тенкĕ ӳснĕ. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне 8482 тенкĕ пулнăччĕ.

**Патшалăх пенсийĕсене (социаллă пенсисем, вăрçă инваличĕсемпе участникĕсене, вилнĕ çар çыннисен ашшĕ-амăшне паракан пенсисем) 1,81 процент индексациленĕ.** Ку вăл Раççейре пенсионера пурăнма кирлĕ минимумăн виçи ӳснин шайĕпе танлашать. Чăваш Республикинче социаллă пенсисен вăтам виçи 82 тенкĕ ӳсрĕ, 5200 тенкĕпе танлашрĕ. Пирĕн районпа вара пенсин вăтам виçи 90 тенкĕ ӳсрĕ, 5420 тенкĕпе танлашрĕ.

1-мĕш ушкăн инвалид ачасен тата ачаран инвалидсен социаллă пенсине 8704 тенкĕ таран ӳстерес ыйтăва çывăх вăхăтрах татса парĕç. Ăна валли Федераллă ятарлă уйрăм саккун хатĕрленĕ. Саккун проектне Раççей Президентне алă пусма хатĕрлесе панă.

Çапла вара 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенси виçи пур пенсионерăн та ӳсрĕ. Чăваш Республикинче хальхи вăхăтра 348 пин пенсионер шутланать. Вăл шутран 320 пин çын ватлăха, инвалида тухнине пула тата çемьере тăрантаракана çухатнипе, 28 пин çын патшалăх пенсине илсе тăрать. Кашни пенсионерăн пенси ӳсĕмĕн виçи расна, вăл унччен пенси мĕн чухлĕ пулнинчен килет. Икĕ пенси илсе тăракан Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен пенси вăтамран 646 тенкĕ ӳсрĕ, пĕтĕмĕшле вăтамран 24 пин тенкĕпе танлашрĕ.

Пенсисене ӳстерне май çавна валли каякан тăкаксен уйăхри виçи те республикипе апрельтен вăтамран 100 миллион ытла тенкĕ пысăкланать, çулталăк вĕçленнĕ тĕле вăл 986 миллион тенкĕпе танлашать.

**Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕ апрельтенпе çак шайра:**

| Категорисем | ЕДВ виçи 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса (тенкĕпе) | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Соцпакета пĕтĕмпех илмесен (839,65) | Пĕтĕм соцпакетпа усă курсан | Усă курмалли правăна сыхласа хăварсан | | | | | |
| | | | Эмел тӳлевсĕр илессине (646,71) | Санаторисемпе курортсене каяссине (100,05) | Транспортпа çӳрессине (92,89) | Эмел тӳлевсĕр илессине тата санаторисемпе курортсене каяссине (646,71+ 100,05=746,76) | Транспортпа çӳрессине тата эмел тӳлевсĕр илессине (646,71+ 92,89= 739,60) | Транспортпа çӳрессине тата санаторисемпе курортсене каяссине (92,89+ 100,05=192,94) |
| Вăрçă инваличĕсем | 4045,56 | 3205,91 | 3398,85 | 3945,51 | 3952,67 | 3298,80 | 3305,96 | 3852,62 |
| Вăрçă участникĕсем | 3034,16 | 2194,51 | 2387,45 | 2934,11 | 2941,11 | 2287,40 | 2294,56 | 2841,22 |
| Çар çыннисем | 1214,45 | 374,80 | 567,74 | 1114,40 | 1121,56 | 467,69 | 474,85 | 1021,51 |
| Çапăçусене хутшăннисем | 2225,84 | 1386,19 | 1579,13 | 2125,79 | 2132,95 | 1479,08 | 1486,24 | 2032,90 |
| 1-мĕш ушкăн инваличĕсем | 2832,41 | 1992,76 | 2185,70 | 2732,36 | 2739,52 | 2085,65 | 2092,81 | 2639,47 |
| 2-мĕш ушкăн инваличĕсем, инвалид ачасем | 2022,78 | 1183,13 | 1376,07 | 1922,73 | 1929,89 | 1276,02 | 1283,18 | 1829,84 |
| 3-мĕш ушкăн инваличĕсем | 1619,27 | 779,62 | 972,56 | 1519,22 | 1526,38 | 872,51 | 879,67 | 1426,33 |

**2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнсах федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕ (ЕДВ) тата соцпакет та ӳсрĕç.**

**Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансен соцпакечĕн хакĕ 2013 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса уйăхне 839 тенкĕ те 65 пуспа танлашать.** Вăл шутран эмел пайĕ – 646 тенкĕ те 71 пус, санаторипе курорт пайĕ – 100 тенкĕ те 5 пус, транспорт пайĕ – 92 тенкĕ те 89 пус.

ЕДВ тата соцпакет хакне тӳлеме каякан тăкаксем республикипе апрельтен тытăнса уйăхне 10 миллион тенкĕ ӳсеççĕ, çулталăк вĕçленнĕ тĕле – 89 миллион тенкĕ.

Чăваш Республикинче федераллă çăмăллăхсемпе усă куракан 111 пин çын уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕ илсе тăрать. Вăл шутран инвалидсем 87 пин çын. Муркаш районĕнче 3076 çын уйăхсерен паракан укçа тӳлевне тивĕçнĕ.

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем шутне Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем, çапăçусене хутшăннă ветерансем тата вĕсен пĕчченн тăрса юлнă мăшăрĕсем, радиаци катастрофисене пĕтерме хутшăннисем тата граждансен ытти хăш-пĕр категорийĕсем кĕреççĕ.

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

# Налук сахалрах тӳлĕç

**Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнакансем валли налук тӳлессипе çăмăллăхсем пăхса хунă. Акă хăйсен пенсийĕсен пухăнакан пайĕ валли хушма взноссем хывакансене асăннă суммăшăн 13 процент налукран хăтарма пултараççĕ.**

Налук шайне мĕн чухлĕ чакарасси Программăна хутшăнса взноссем мĕн чухлĕ хывнинчен килет. Калăпăр çулталăкне 12 пин тенкĕ тӳленĕ пулсан налук инспекцийĕ Программăна хутшăнакан çыннăн банк счечĕ çине 1560 тенкĕ куçарса парать. Çав вăхăтрах унăн Пенси фондĕнчи лицевой счечĕ çинче патшалăх хушса финансланине шутласан 24 пин тенкĕ шута кĕрет.

Социаллă налук суммине чакарассин мелĕпе 3 çул хушши усă курма пулать. Çавна валли вырăнти налук инспекцине тупăшсен декларацине тăратмалла тата заявлени çырса памалла. Çавăн пекех страховани взносĕсем тӳленине ĕнентерекен документсем çитерсе парас пулать. Кусем вĕсем банк квитанцийĕ е ĕç паракан справки. Тара кĕрĕшсе ĕçлекенсен бухгалтерире 2-НДФЛ формăллă справка илме тивет. Çавна палăртса хăварни пĕлтерĕшлĕ. Налук тӳлевне ĕçлекен граждансенне налук хумалли тупăшран чакарса параççĕ.

Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнса ирĕклĕ майпа взноссем хывакансен шучĕ çуллен ӳссе пырать. 2009 çулта районта кун пеккисем 127 çын пулнă пулсан, иртнĕ çул кун пеккисем 382 çынна çитрĕç. Республикипе ку кăтартусем 7,6 пин тата 16,9 пин çын. Программа вăя кĕнĕренпе республикăра пурăнакансем хăйсен пулас пенсийĕсене ӳстерме 245 миллион ытла тенкĕ куçарнă.

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ çавна аса илтерет. Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен хутшăнма пулать. Асăннă кунччен пĕрремĕш взнос 2 пин тенкĕрен кая мар хывма ĕлкĕрмелле. Программăна 14 çул тултарнă граждансем пурте, кунпа пĕрлех пенсионерсем те хутшăнма пултараççĕ.

Программăна хутшăнма кăмăл пулсан Пенси фондне пырса та, ĕç вырăнĕнче те заявлени çырса пама пулать. Кунсăр пуçне патшалăх услугисен пĕрлехи www.gosuslugi.ru порталĕнче регистрациленсе Интернет урлă та заявлени пама май пур. Çавăнпа пĕрлех заявленисене банксенче тата алă пуснисен чăнлăхне шантарассипе Раççей Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче те йышăнаççĕ. Вĕсен списокĕ те, заявлени бланкĕ те Раççей Пенси фончĕн www.pfrf.ru сайтĕнче пур.

Программăна хутшăнакансем хăйсен пулас пенсийĕ валли хушма взноссем 10 çул хушши тӳлесе тăма пултараççĕ. Унăн виçине вара вĕсем хăйсем тĕллĕн палăртаççĕ. Патшалăх хушса финанслассине тивĕçес тесен çулталăкне 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ таран тӳлемелле. Çакна бухгалтери урлă ĕç укçинчен тытса юлмалла та тума пулать, взноссене кирек хăш банкра та йышăнаççĕ. Перекет банкĕнче взноссене банк карттипе е банкоматсем урлă, тӳлев терминалĕсенче тӳлеме май пур.

Программăна хутшăнакансем хушма пенсие пенси ӳсĕмне çитсен, çавăн пекех ватлăха пула паракан ĕç пенсине вăхăт çитмесĕрех пама пуçăннă чухне те илме тытăнма пултараççĕ. Чăваш Енре 2013 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне Программăна хутшăнакан 1,8 пин çын хушма пенси илме тытăннă ĕнтĕ.

Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программипе çыхăннă ыйтусем пулсан, тӳлевсĕрех тата талăкĕпех 8-800-510-55-55 телефонпа шăнкăравлама пулать. Раççей Пенси фончĕн сайчĕн «Онлайн-консультация ПФР» пайĕнче интернет-чат режимпа та çыхăнма пулать. Кунпа пĕрлех кашниех Пенси фончĕн районти управленине пыма е 63-041 телефонпа шăнкăравлама пултарать.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

# Электронлă мелпе: патшалăх, муниципаллă услугăсем

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Етĕрне хулинче Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви йĕркеленипе канашлу-вĕренӳ иртрĕ. Унта Муркаш, Элĕк, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсен администрацийĕсен тата хаçачĕсен представителĕсем, ял тăрăхĕсен специалисчĕсем хутшăнчĕç. Ĕç ушкăнне Муркаш районĕн администрацийĕн информаципе тивĕçтерессин пайĕн пуçлăхĕ В. Лаврентьев ертсе пычĕ. Канашлăвăн тĕп теми – ведомствăсем хушшинчи электронлă çыхăну системине (СМЭВ) вăя кĕртесси.

Асăннă çĕнĕлĕх пирки информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин информаци технологийĕсене пурнăçа кĕртессин пуçлăхĕ Ирина Никонорова каларĕ. Хальхи вăхăтра регионсенче анлăрах сарăлнă сведенисем 24. Çакă вăл субъектсем ыйтакан федераллă сведенисен 90 процентне йышăнать. Çапах та тăтăшах тĕл пулаканнисем шутне Росреестр тĕлĕшĕнчи ыйтусем кĕреççĕ. Çавăн пекех Федераллă налук службин, Федераллă миграци службин ыйтăвĕсемпе кăсăкланакансем пур. Çавăн пекех водитель удостоверенине илессипе, пурăнакан вырăнта регистрацие тăрассипе, Раççей Федерацийĕн Пенси фондĕнчен, штрафсем, техосмотр, автомашинăна регистрациелессипе парăмсем пурри е çукки тата ытти пирки информаци илессипе услугăсемпе усă кураççĕ.

– Ведомствăсем хушшинчи электронлă хутшăну системипе патшалăх влаç органĕсен ĕçченĕсем патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтернĕ чухне ведомствăсем хушшинчи тата ытти шайри çăмăллăхсем параççĕ. Пирĕн тĕп тĕллев вара çак системăпа ĕçлеме вĕренесси, çавна май халăх ыйтăвне туллин тивĕçтересси тата çăмăллатасси. Апла пулсан Раççей Федерацийĕн Правительстви шайĕнчи пуçарăва пирĕн вăя кĕртмелле, – терĕ Ирина Валентиновна канашлăва хутшăнакансене.

Çакна патшалăх управленийĕн системин ĕç-хĕлне улăштарас, влаçăн ĕç тăвакан функцине оптимизацилес, çавна май патшалăх службипе çынсем хушшинчи хутшăнăва шайлаштарас, тухăçлăрах йĕркелес тĕлĕшпе пурнăçлаççĕ. Çапла вара çĕнĕ тытăм ку тĕлĕшри ĕçре усçăнлăх кĕртмелле, çынсен ыйтăвĕсене тĕпе илмелле.

Хальхи вăхăтра Чăваш Республикинче патшалăх тата муниципаллă услугăсене электронлă шая куçарассин виççĕмĕш – тăваттăмĕш тапхăрĕ пурнăçланать. Унччен маларах Пĕрлехи порталта услугăсем, документсен бланкĕсем вырнаçтарассипе ĕçленĕ. Виççĕмĕш тапхăрта Портал урлă ыйтакансене электронлă майпа документсемпе тивĕçтерессине йĕркеленĕ.

Системăна вырăнсенче алла илесси кăткăс ĕç шутланать. Çавăнпа та кунта пĕлмелли-хăнăхмалли чылай. Асăннă системăна компьютер технологийĕпе пурнăçласси çинче информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин консультанчĕ Дмитрий Иванов видеоурок ирттерчĕ. Вăл кашни самант çинче тĕплĕн чарăнчĕ, ĕç тапхăрĕнче тĕл пулакан ыйтусем çине хуравларĕ.

Чăваш Енре ведомствăсем хушшинчи электронлă хутшăнăва ĕç тăвакан 15 влаç органĕ, 26 муниципалитет тата 291 ял тăрăхĕ хутшăнать. Çапла вара асăннă системăпа патшалăхăн 64 тата типлă муниципаллă 32 услугăпа тивĕçтермелле. Çаксемпе усă курас тесен регистрациленни кирлĕ. Çапла вара ятарлă код илнĕ хыççăн харпăр хăй кабинетĕнче ĕçлеме пуçăнма пулать. Паянхи кун тĕлне электронлă услугăпа ытларах Шупашкар хули тухăçлă усă курать.

Пирĕн тĕллев пурнăç уттипе тан утасси, çак системăна алла илесси. Паянхи кун тĕлне районта вун виçĕ ял тăрăхĕнче асăннă системăпа çыхăнтарассипе ĕçлеççĕ.

– Хальлĕхе вара пурлăхпа техника бази начартарах пулнипе çак ĕçе ял тăрăхĕсенче тивĕçлĕ шайра йĕркелесе çитерме йывăртарах, çавăнпа та кунта республика шайĕнчен хушма пулăшу уйăрсан аван пулнă пулĕччĕ, – терĕ Муркаш район администрацийĕн информаципе тивĕçтерессин пайĕн пуçлăхĕ В. Лаврентьев.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ас тăвăм

# Аслă Отечественнăй вăрçă летопиçĕ

Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май Раççейре «Пламя памяти» акци ирттереççĕ. Ăна ирттерекенĕ – Пĕтĕм тĕнчери «Дети мира» ыр кăмăллăх фончĕ.

Акцие ачасем, çамрăксен обществăлла пĕрлешĕвĕсем тата кăмăл пуррисем пурте хутшăнма пултараççĕ. Çавна валли хăвăрăн çемье историне, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă аслаçу, аслă аслаçу пирки материалсем хатĕрлемелле. Сăн ӳкерчĕксемпе, вăрçă çулĕсенчи çырусемпе тата ытти материалсемпе усă курмалла. Çакă вăл пĕтĕмпех ветерансен аса илĕвĕсемпе усă курса истори летопиçне хатĕрлеме, çамрăксенче патриотизм туйăмне çуратма тата çирĕплетме кирлĕ.

Акци тĕллевĕ совет салтакĕн паттăрлăхĕ çинчен каласа парасси кăна мар, кунпа пĕрлех йывăр лару-тăрури ветерансене хăйсен проблемисене татса пама пулăшасси те. Çак ĕçе влаç органĕсемпе предпринимательсене те явăçтарма пăхнă.

Ыр кăмăллăх акцийĕ виçĕ тапхăрпа иртет. Кашнин итогĕсенех Мускавра майăн 5 – 10-мĕшĕсенче пĕтĕмлетеççĕ. Пĕрремĕшĕ 2013 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче вĕçленет. Иккĕмĕшне 2014 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчен тытăнса апрелĕн 25-мĕшĕччен йĕркелеççĕ. Акцин виççĕмĕш тапхăрне 2015 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса майăн 10-мĕшĕччен ирттерме пăхнă.

Ыр кăмăллăх акцийĕ пирки тĕплĕнрех Пĕтĕм тĕнчери «Дети мира» ыр кăмăллăх фончĕн сайтĕнче пĕлме пулать.

Юсавлă техника мал ĕмĕт çуратать

# Çур аки васкатать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Кун таврăнсан çур акине кĕтсех тăр: сиссе те юлаймăн, кăнтăртан тăртăр-и тесе ыйтакан тăрисем вĕçсе килĕç, сар хĕвелпе, ăшă çил вăйĕпе хирсем юртан тасалĕç, çĕр ĕçченĕ



умне çурхи ака-суха тухĕ. Кăçалхи çанталăк вара кун пирки уйрăмах çивĕч аса илтерсе тăрать. Вăхăт çитсен, кӳршĕ хуçалăхсем çур акине тухса кайсан, сӳре агрегачĕ патне пĕрремĕш хут гайка çăраççине йăтса пыракан хресчен пирки вăл малашлăха çирĕп пăхать тесе епле калайăн-ха? Кун пек ĕçлекене, каçарăр та, ниммĕнле наци проекчĕ те аталану çулне уçса параймасть. Çак шухăшлавпа кун йĕркинче тăракан тĕреслĕхе В. Андреев ертсе пыракан Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче хура кĕркуннеренпех асра тытаççĕ. Асра тытаççĕ те çанă тавăрса ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

Ăшă çанталăк ăшă çанталăкпа та, анчах малалла пăхакан кăçалхи условисенче те тырă алама меллĕ сивĕрех кунсемпе туллин усă курчĕ. Акма кирлĕ вăрлăхăн (1525 центнер) тĕп пайне ака кондицине лартрĕ. Иртнĕ кунсенче вара çур аки валли минераллă удобрени те кӳрсе килчĕ.

Кун вăрăмланнă май çур аки ыйтăвĕ кашни çĕр ĕçченнех шухăшлаттарать. Урăхла епле-ха, çурхи кун çулталăк тăрантарать вĕт. Уй-хир ĕçĕсем вара ытларах техникăпа çыхăннине шута илсе, ĕçре усă курмалли техникăна маларах техника тĕрĕслевĕ витĕр кăларса, вĕсем ĕçе епле хатĕррине пĕлмелле. Ку тĕлĕшпе Раççей шайĕнче тракторсене, хăй тĕллĕн çӳрекен çул-йĕр тата строительство техникине, вĕсен прицепĕсене патшалăх техника тĕрĕслевне тăратмалли йĕркене çирĕплетнĕ. Вăл паян пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемшĕн, инженерсемпе механизаторсемшĕн тĕп саккун пулса тăрать.

Çӳлерех асăннă йĕркене пăхăнса ЧР Патшалăх техника надзор управленийĕн пуçлăхĕн В. Димитриевăн хушăвĕпе район валли çирĕплетнĕ график та пур. Унпа килĕшӳллĕн районти тĕрĕслевсем апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланчĕç. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕпе хальлĕхе савăнмалли сахал. Çирĕплетнĕ графикпа тĕрĕслев вăхăтне маларах палăртнă хуçалăхсем ăна хатĕрленсе çитейменнине кура тĕрĕслеве каярах вăхăта куçарма ыйтса çырупа тухрĕç. Çур аки вара кĕттермест. Çавăнпа та саппас пайсемпе механизаторсем çитнине кура вырăнсенче хатĕрленӳ ĕçĕсене хăвăртлатмалла кăна. ЧР Пуçлăхĕ М. Игнатьев кăçалхи çур акине 10 кунта вĕçлеме ыйтни хатĕрленӳ ĕçĕсем çине хуçалларах пăхмалли пирки калать.

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче умри яваплăха хресчен чунĕпе ăнланать. Çакна эпир Анаткассисем уйхир ĕçĕнче усă курма пăхнă техникăна техосмотр тăратнинчен куртăмăр. Ака-суха вăхăтĕнче хире 7 трактор тухмалла пулсан ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче ЧР Патшалăх техника надзор управленийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев хутшăннипе иртнĕ техника тĕрĕслевне хуçалăх 5 тракторпа 3 прицеп тăратрĕ. Пĕчĕк кăлтăксене пĕтерсен вĕсем пурте саккунпа килĕшӳллĕн ĕçе хатĕрри хуçалăхри механизаторсем хĕл ыйхинчен вăранни пĕрремĕш кун пулманнине çирĕплетрĕ.

– Юлашки çулсенче ял хуçалăх техникине хĕллехи управа ГОСТпа килĕшӳллĕн лартни çур акине хатĕрленме те пулăшать. Мĕн кирлине, мĕн çитменнине эпир хĕл каçа хатĕрлерĕмĕр ĕнтĕ. Трактор прицепĕсене те çĕнетсе юсарăмăр. Механизаторсем çитеççĕ. Çапла вара çур акине пирĕн хуçалăхра 7 агрегат хутшăнмалла: 3 – çĕр хатĕрлекенни, 3 – акаканни, пĕри – акнă пусăсене пусăрăнтараканни. Икĕ автомашина хире вăрлăхпа минераллă удобрени турттарса тăрĕ. Ĕçлекенсен ĕç условийĕсем те паллă, – терĕ Г. Викторов тĕп инженер. 32-мĕш çур акине хутшăнакан Геннадий Аверкиевич хăйĕн ХТЗ-17221 тракторне кăçал та хире тухма тирпейлĕ хатĕрленĕ. Тирпейлĕх тенĕрен. Уй-хир ĕçĕсене тухакан кашни трактор çинче паян медицина аптечки, огнетушительсем, ытти хăрушсăрлăх хатĕрĕ пур.

– Хăрушсăрлăх ыйтăвне кун йĕркинчен кăлармастпăр, – терĕ тĕп инженер ЧР Патшалăх техника надзор управленийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев механизаторсемпе irттернĕ калаçура.

Тĕрĕслев ĕçĕсем районта малалла пыраççĕ. Юсавлă техника çеç çур аки пахалăхне ӳстерĕ, çĕр ĕçченне пысăк тухăç илме шанчăк парĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Г. Викторов техникăна хатĕрлет.**

# Мĕн акатăн – çавă шăтать

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ СУРТРИ ВĂРЛĂХĔН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛĔ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(ака уйăхĕн 5-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх кирлĕ. 2. Тĕрĕслеттернĕ (центнерпа). 3. Кондициллĕ вăрлăх (процентпа). 4. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе. 5. Вăл шутран тасалăхпа. 6. Çум курăк вăррисемли. 7. Шăтаслăхпа (центнерпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1200 | 1200 | 83 | 200 | 200 | 0 | 200 |
| «Восток» | 886 | 886 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Герой» | 1448 | 1448 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 3700 | 3700 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Путь Ильича» АФ | 1401 | 1401 | 68 | 452 | 452 | 152 | 452 |
| «Оринино» | 1351 | 1351 | 93 | 100 | 100 | 100 | 0 |
| «Передовик» | 300 | 300 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Свобода» | 2623 | 2623 | 94 | 145 | 145 | 145 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 1525 | 1525 | 81 | 295 | 0 | 0 | 295 |
| «Ударник» | 1860 | 1860 | 49 | 950 | 950 | 950 | 0 |
| Чапаев яч. хис. | 1111 | 1111 | 86 | 161 | 161 | 0 | 161 |
| Чкалов яч. хис. | 800 | 800 | 0 | 800 | 300 | 0 | 500 |
| Мичурин яч. хис. | 400 | 400 | 0 | 400 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Толстов А.И. | 500 | 500 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Бархаткин В.В. | 860 | 860 | 65 | 300 | 300 | 300 | 0 |
| ООО «Гея» | 300 | 300 | 0 | 300 | 0 | 0 | 300 |
| ООО «ВаСем» | 500 | 500 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| ООО «Бездна» | 700 | 700 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Трепнев А.А. | 580 | 580 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Ямангиева | 15 | 15 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Фасхутдинов М.С. | 280 | 260 | 23 | 200 | 200 | 0 | 0 |
| КФХ Каргин Р.Л. | 200 | 200 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Мерлов А.В. | 380 | 380 | 82 | 70 | 70 | 0 | 0 |
| КФХ Петрова И.В. | 80 | 80 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Сретинский С.К. | 400 | 400 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Мольков М.Г. | 80 | 80 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Иванов А.Н. | 100 | 100 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Краснов В.С. | 40 | 40 | 100 | 0 | 0 | 0 | 0 |
